Чăваш Республикин « Элĕк районĕнчи пĕрлештернĕ библиотека системи» муниципаллă культура бюджет учреждниийĕ
Элĕкри тĕп библиотека
Методикăпа библиогрфи пайĕ

# Максим Ястран яланах халăх асăнче

***Максим Ястран çуралнăранпа 100 çул çитнине халаласа хатĕрленĕ методика материалĕ.***



Элĕк сали, 2016 ç.

ББК 78.38
М 15

Максим Ястран яланах халăх асăнче: Максим Ястран çуралнăранпа 100 çул çитнине халаласа хатĕрленĕ методикă материалĕ/ Чăваш Республикин « Элĕк районĕнчи пĕрлештернĕ библиотека системи» муниципаллă культура бюджет учрежденийĕ; пухса хатĕрлекене А.Ф. Егорова.- Элĕк сали, 2016.- 8 с.

*Элекри теп библиотека*
*Методикапа библиотграфи пайĕ*
*Чăваш Республикин «Элĕк районĕнчи пĕрлештернĕ библиотека системи» муниципаллă культура бюджет учрежденийĕ*
***429250 ЧР,*** Элĕк ***районĕ, Элĕк сали, Советски урамĕ, 13ç.***
***Тел.: 883535 22-9-07***
*e-mail:alik_bib@cbx.ru*

# Тупмалли

Биографии……………………………………..4
Максим Ястран кĕнекисем………..............7
Еçĕ - хĕлĕ çинчен
Кĕнекесем…………………………………...7
Статьясем……………………………………8
Сценари……………………………………12

**Биографи**

Максим Ястран (Максим Григорьевич Григорьев) çулхи августăн 26 – мĕшĕнче Элĕк районĕнчи Вăрманкас Юнтапа ялĕнче чухăн хресчен килйышĕнче çуралнă. Пĕчĕклех тăлăха тăрса юлнă. Асакассинчи колхоз çамрăкĕсен шкулĕнчен Максим лайăх паллăсемпе вĕренсе тухнă. Шкулта вĕреннĕ чухнех сăвăсем çырнă. Поэт архивĕнче 1931 çулта çырнă «Уяв пек ман çамрăклахăм» сăвва куратпăр. Сăвă айĕнче Шевлир тесе алă пуснă. Çав вăхăтра вăл 1934 çулччен Шевлир тата Ястребцев псевдонимсемпе çырать. 1932 -35 çулсенче поэт Шупашкарти медицина рабфактĕнче вĕренет. Рабфакра вĕреннĕ чухне Максим Ястранăн çырас туртăмĕ вайланать. Рабфакри ытти çамрăк çыравсăсемпе пĕрле алăпа çырса «Октябрь кĕввисем» ятлă журнал кăларма пуçлать. Журналта 1933- 36 çулсенче çырнă произведениесем Ястран ятпа пичетленеççĕ.

Максим Ястран 1936 çулта медицина рабфакĕнчен вĕренсе тухмасăрах «Самрăк большевик» хаçатăн типографийĕнче ĕçлеме тытăнать. Анчах тепĕр виçĕ уйахранах «Пионер сассипе» «Самрăк большевик» хаçатсен тата «Хатĕр пул» журнал редакцийĕнче ĕçлеме пуçлать, унта 1939 çулччен ĕçлет. М. Ястран А.С. Пушкин, Я.П. Полонский, Н. Некрасов, М. Лермонтов, К. Симонов, М. Светлов, А. Жаров, И.Уткин, В. Маяковский, М.Ю. Лермонтов произведенийĕсене куçарать.

1941 çулхи январĕн 15- мĕшĕччен республикăри халăх пултарулăх çуртĕнче фольклор методисчĕнче ĕçлет. Сакăнта ĕçленĕ çулсенче поэт ăсталăхĕ уйрамах анлă çунат сарать. Хай тĕллĕн вĕреннĕ тавракурăмне анлăлатас тесе, поэт Мускаври А.М. Горький ячĕпе хисепленекен Литература институтне курмăсар майĕпе вĕренме кĕне.

Тăван çершывăн Аслă вăрçи пуçлансан, М. Ястран «Чăваш коммуни» хаçат редакцийĕн районĕсене тухса çурекен корреспонденчĕ пулса танă. Хаçатра заметкасемпе пĕрле унăн фашизама хирĕç кĕрешме чĕнекен савасем те пичетленнĕ. 1941 çулта, вăрçă пуçлансанах, «Аьтăр,

тантăшсем» ятлă йыхравлă сăвă çырнă. Ана Г. Лисков çийĕнчех кĕвĕленĕ.

М. Ястран 1942 çулхи март уйăхĕнче фронта тухса кайнă. Поэт 1942 çулта сентябрĕн 11- мĕшĕнче Сталинград патĕнчи çапăçура паттăрсен вилĕмĕпе вилнĕ. 1962 çулхи май уйăхĕнче ăна СССР писательсен членне илнĕ.

Максим Ястран çырнă сăвăсем халăх сăвви- юррине çывăх тăраççĕ. Сырнă вăхăтра вăл халăх пултарулăхне те тĕпченĕ. Юрăсем, такмаксем, йăла- йĕрке иртермелли сăмахсене çыра- çыра илнĕ. Унăн произведенийесенче халăх поэзийĕн витĕме вăйлан палăрать, сăвă çеми шăнкăртатса юхать, ăна кĕвве хурса юрласа ярас килет:

Ирпе, ешĕл сада тухса,
Мерчен шăрçа, ай, пухасчĕ,
Йепхĕм чие çине ларса,
Шапчăк пулса, ай, юрласче.

Вăтăрмĕш çулсен вĕсенче «Паттăр Херлĕ Сар», «Шăнкарав юрлать», «Пахчари каласу», «Пирĕн аттен çич ывал» çырнă саввисем Тăван çершыва паттăрăн хутелемеченеççĕ.

М. Ястран çĕршыв тăрăх тĕрлĕ халăхра çуреççĕ сăвă хыççан сăвă шăрçаланă: «Украинăра» ( 1940), «Пятигорск» (1939), «Сазандар» (1940), «Юрислан Салавата асăнса»( 1941), «Горец юррисенчен» (1941). Сак сăвăсенче поэт халăхсен хушшинчи туслăха катартнă.

Поэт нумай ĕçленĕ, çырнă, шыранă. Тĕрĕс те витемлĕ сăмахсемпе сăвва янравлăрах тума тарашнă. Чăваш чĕлхи пуян, хитре пулнине ĕнентернĕ. М. Ястран чăваш поэзийĕн никĕсне хывнă Сеспĕл Мишши сăввисене юратса вуланă, унран вĕреннĕ. «Украинăра» сăвăра поэт Днепр хĕрринче поэт çӳренĕ вырăнсемпе паллашма кайни çинчен калать. Сеçпĕл ĕçне малалла тăвас кăмăлне палăртать.

Сав вăхăтрах вырăс поэзинчи çĕнĕ те паха тĕслĕхсемпе хавхаланнă, вĕренсе пынă. Унăн малтанхи произведенийĕсем çутçанталăк илемне лайăх çутатаççĕ. Юратса çырать поэт ял пурнаçĕ çинчен «Суркунне», «Шăплăхра», «Колхоз хĕрĕсем», «Хирсенче хуралчĕ» сăвăсенче.

Максим Ястран пысăк калăплă произведениесм те çырнă. Вăл шутра М.Ю. Лермонтова халалланă поэма. «Лермонтов» поэмăра вырăс халăх поэчĕн сăнарĕ туллин палăрман. Ытларах ĕçленĕ пулсан, çав произведени паха япалах пулса тухма пултараччĕ.
Максим Ястран – журналист, хаçатçă. Унăн хаçатсемпе журналсенче пичетленнĕ статьясем терлĕ ыйтусем хускатаççĕ. Унăн 1935-41 çулсенче публисцикăлла очерксемпе ытти ĕçĕсене сак темăсене пайлама пулать: çĕнĕ пурнăç çыннисене сăнлакан очерксем, литература ыйтăвесемпе çырнă ĕçĕсем, терлĕ ыйтусемпе çырнă статьясем.
Максим Ястран чăваш поэзийĕн çĕнĕ формисене шыранă, тăван чĕлхен пуянлăхне кăтартса парасшăн пулнă, çавăнпа вырăс тата ытти халăхсен поэзине тĕпченĕ.
Поэтăмăр кăткăс рифмăсем хайласа тупма юратнă, чĕлхере пĕрчĕн- пĕрчĕн тенĕ пек сăмах суйланă. Çакна вăл çырнă йăлтах пĕр саспаллирен пуçланакан сăвăсем кăтартса параççĕ.
Максим Ястран вăрçă вăхăтĕнче нумай çырайман пулсан та, хăй пурăннă чух çырса хăварнă произведенисем пурнăçри фактсене тĕрĕс çутатса кăтартнипе пăлăрса тăраççĕ. Вĕсем вăрçăра пулса иртнине тĕплĕнрех пĕлсе тама пулăшнă, Чăваш çĕршывĕн паттрăр ывăл хĕрĕсемпе паллаштарнă.
Максим Ястранăн «Хĕрлĕ çăлтăр», «Сĕнтеру ялавĕ», «Сăвăсем», «Лирика», «Сăвăсемпе поэмăсем» кĕнекисем вулакансемпе паян кун та каласаççе. Поэт, кусаруçă, журналист Максим Ястран халăх асĕнче яланах упранĕ.

**Максим Ястран кĕнекисем:**

**Ястран, М. Г.** (1916-1942). Лирика: поэзия / М. Г. Ястран. - Шупашкар: Чăвашиздат, 1964. - 128 с.

**Ястран, М. Г.** (1916-1942). Сăвăсем: поэзия / М. Г. Ястран. - Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 1986. - 62 с.

**Ястран, М. Г.** (1916-1942). Ҫӗнтерӳ ялавӗ : сӑвӑсем / М. Г. Ястран. - Шупашкар : Чӑвашгосиздат, 1941. - 24 с.

**Ястран, М. Г.** (1916-1942). Хӗрлӗ ҫӑлтӑр : сӑвӑсем / М. Г. Ястран. - Шупашкар : Халӑх творчестви ҫурчӗ, 1940. - 25 с.

**Максим Ястран пурнасепе есе – хеле синчен**
**Кӗнекесем**

**Чӑваш юррисен антологийӗ** [Ноты] / [А. М. Токарев пухса хатӗрленӗ; Юрий Илюхин ум сӑмахӗ; худож. В. Ф. Солодовников]. - [Клавир]. - Шупашкар: Чӑваш АССР государство издательстви, 1959. - 191 с.: ноты; 29 см.

**Воробьев, В. П.** Ҫӗнӗ юрӑсем [Ноты] / В. П. Воробьев. - [Клавир]. - Чебоксары : Чувашгосиздат, 1948. - 19 с. - (Хорпа юрламалли )

**Пирӗн юрӑсем** [Ноты] = Наши песни : сборник песен чувашских композиторов / под ред. Г. Лобачева ; [предисл. В. Ржанова]. - аккомп. - Москва ; Ленинград : Музгиз, 1949. - 351 с.

**Тӑван ҫӗршывшӑн** : Аслӑ отечественнӑй вӑрҫӑра тӑван ҫӗршывшӑн паттӑррӑн ҫапӑҫса вилнӗ чӑваш писателӗсен произведенийӗсем / А. Алга пухса хатӗрл. . - Шупашкар : Чӑвашгосиздат, 1956. - 261[2] с.

**Воробьев, В. П.** Юрӑсем [Ноты] / комп. В. П. Воробьев. - Шупашкар: Чӑваш кӗнеке издательстви, 1987. - 64 с. : ноты. - 1000 экз.

**Статьясем**

**Ананьев, А.** Вулавӑш - Ястран ячӗпе : [сӑвӑ] / Александр Ананьев // Пурнӑҫ ҫулӗпе. - 2011. - **3 авӑн (№ 84/85)**. - С. 6.

**Ананьев, А.** Сӑввисем илемлӗ, янравлӑ : [Максим Ястран поэт ҫинчен] / Александр Ананьев // Пурнӑҫ ҫулӗпе. - 2011. - **10 авӑн (№ 87/88)**. - С. 2.

**Арланова, Е. Ф.** Сӑмахпа та, пӑшалпа та : [Максим Ястран

çыравçă çинчен] / Е. Арланова // Пурнăç çулĕпе. - 2011. - **27 çурла (№ 81/82)**. - С. 2 : фот.

**Еливанова, Г.** (К. В. Иванов ячĕллĕ Литература музейĕн наукăн аслă сотрудникĕ). "Çут Атăл евĕр кăмăл анлă..." [Текст] : [Максим Ястран поэт çинчен] / Галина Еливанова // Тантăш. - 2006. - **28 авăн (№ 38)**. - С. 4-5.

**Иванов, А.** Вăрманкас ялĕнчен тухнă поэт [Текст] : [Максим Ястран поэт пурнăçепе пултарул. çинчен] / А. Иванов // Пурнăç çулĕпе (Элĕк р-нĕ). - 2001. - **25 çурла**.

**Иванов, А.** "Вилсессĕн пулăп сăвăç та такмакçă!" [Текст] : [Максим Григорьевич Ястран поэт çинчен] / Ананий Иванов // Пурнăç çулĕпе. - 2015. - **5 çĕртме (№ 42)**. - С. 7 : сăн ӳкерчĕк.

**Иванов, А.** Вулакана илĕртме пултарать: [Вутланти Максим Ястран ячĕллĕ тĕслĕхлĕ библиотека çинчен] / Ананий Иванов // Пурнăç çулĕпе. - 2015. - **11 раштав/декабрь (№ 96)**. - С. 6: сăн ӳкерчĕк.

**Лукина, Е.** Тухтăра вĕренсен те алăри перо ытларах илĕртнĕ : [Максим Ястран поэт çинчен] / Елена Лукина ; Е. Лукина сăн ӳкерчĕкĕсем // Çамрăксен хаçачĕ. - 2015. - **27 çурла (№ 34)**. - С. 5 : сăн ӳкерчĕксем. - (Çыравçă ялĕнче - хăнара).

**Капитонова, И.** (гл. специалист Госархива печати Чувашии). Пламенное сердце поэта [Текст] : [к 90-летию со дня рождения Максима Ястрана] / И. Капитонова // Вперед (Шумерлинский район). - 2006. - **30 сентября**. - То же на чувашском языке: Малалла, 2006, 30 авăн.

**Максим Ястран "Сан** çинчен çыртăм эп сăвă-юрă, сăмаха ахах пек суйласа..." : Максим Ястран çуралнăранпа - 95 çул // Тăван Атăл. - 2011. - **№ 8**. - С. 91-94.

**Михайлова, Г.** Сталинградшăн чăваш журналисчĕсем те çапăçнă : [фашистла Германи çарĕсене Сталинград çывăхĕнче çапса аркатнăранпа 70 çул çитнĕ май] / Галина

Михайлова // Хыпар. - 2013. - **6 нарӑс (№ 21)**. - С. 2.

**Михайлов, А.** На войну уходили журналисты... [Текст] : [О сотрудниках республиканской молодежной газеты, сменивших в войну перо на автомат] / Андрей Михайлов // Молодежный курьер. - 2004. - **21-27 апреля (№ 15)**. - С. 12. - (Честь имею).

**Михайлов, А.** "Чӑваш коммуни" журналисчӗсем - фронтра : [Тӑван ҫӗршывӑн Аслӑ вӑрҫине хутшӑннӑ журналистсем ҫинчен] / Андрей Михайлов // Хыпар. - 2009. - **7 ҫу (№ 87)**. - С. 3.

**"Не до ордена.** Была бы родина" [Текст]: [об издании Волгоградской писательской организацией поэтического сборника десяти авторов-фронтовиков, погибших под Сталинградом, трое из которых из Чувашии (В. Бараев, И. Думилин, М. Ястран)] // Советская Чувашия. - 2005. - **29 апреля**. - С. 2. - (Час пик / над выпуском работали: В. Вадимов).

**Паллӑ поэта асӑнса** - тӑван ялӗнче палӑк [Текст] : [Максим Ястран ҫуралнӑранпа 85 ҫул ҫитнӗ тӗле Элӗк р-нӗнчи Вӑрманкас Юнтапара палӑк уҫни ҫинчен фоторепортаж] / П.Михайлов сӑн ӳк. // Хресчен сасси. - 2001. - **18 авӑн**.

**Пурӑннӑ пулсан 90** ҫул тултаратчӗ [Текст] : [Михаил Ястран (Григорьев) сӑвӑҫ ҫинчен тата унӑн сӑвви] // Пурнӑҫ ҫулӗпе. - 2006. - **26 ҫурла**. - Содерж.: Ястран, М. Август : [сӑвӑ] / Михаил Ястран.

**Тӑван ҫӗршывӑн Аслӑ** вӑрҫи ҫинчен ҫырнӑ сӑвӑсем // Тӑван Атӑл : литературӑпа культура тата искусство журналӗ. - 2016. - **№ 6**. - С. 6-10. - (Астӑвӑм).

**Ылтӑн ҫӳпҫерен** [Текст] : [чӑвашран тухнӑ ҫар фотожурналисчӗсем пирки] // Ҫамрӑксен хаҫачӗ. - 2006. - **5 ҫу (№ 17)**.

**Юрьев, Ю.** Поэт ятне халăх çĕклет [Текст] : [Элĕк р-нĕнчи Вăрманкас ялĕнче çуралса ӳснĕ М.Ястран поэт 85 çул тултарчĕ] / Ю. Юрьев // Пурнăç çулĕпе (Элĕк р-нĕ). - 2001. **- 15 авăн**.

**Ялкир, П.** Ĕмĕтне вăрçă татнă : [Максим Ястран сăвăç çинчен] / П. Ялкир // Хыпар. - 2001. **- 29 çурла**.

**Ястран, М.** Вилнĕ тусăма [Текст] : [сăвă] / Максим Ястран ; Петĕр Ялгир хатĕрленĕ // Ялав. - 2005. - **№ 5**. - С. 61. - Автор çинчен кĕскен калани пур.

**Ястран, М. Г.** Çĕнтерӳ ялавĕ. Комсомол юрри. Нимĕç ĕçхалăхне. Пирĕн аттен çич ывăл. : [халăх юрри тăрăх]. Хĕр юрри. Вилнĕ тусăма. Йĕтес. Иçĕм çырли. Уйри çăка. Хĕр ӳпкевĕ. Çĕмĕрт. Тинĕсри баллада. Пилеш хуйхи. Шăплăхра. Сăвăç. Çăкалăхра. Уйрăлу. Темĕскер-мĕскер : [юмах] : [сăвăсем] / М. Г. Ястран // Тăван çĕршывшăн : Аслă отечественнăй вăрçăра тăван çĕршывшăн паттăррăн çапăçса вилнĕ чăваш писателĕсен произведенийĕсем / А. Алга пухса хатĕрл. . - Шупашкар : Чăвашгосиздат, 1956. - С. 208-256 : сăн ӳкерчĕк.

**Ястран, Максим.**Çăкалăхра ; Пирĕн аттен çичĕ ывăл ; Ирхине, шурăмпуç çĕкленсессĕн : [сăвăсем] / Максим Ястран // Тăван Атăл. - 2009. - **№ 7**. - С. 152-154. - Содерж.: Максим Ястран. - (Чăваш поэзийĕн антологийĕ. IX / кăларăма П. Афанасьев, Ю. Сементер, Г. Юмартпа И. Трофимова пухса хатĕрленĕ).

**Ястран, М.** Ирхине, шурăмпуç çĕкленсессĕн : [сăвă] / Максим Ястран // Тăван Атăл : литературăпа культура тата искусство журналĕ. - 2013. - **№ 5**. - С. 9 : фот. - (Поэзи. Вăрçă ĕнтнĕ сăвăсем).

**Ястран поэт** [Текст] : [Максим Ястран çинчен] // Хыпар. - 2014. - **16 çурла (№ 159/160)**. - С. 13 : сăн ӳкерчĕк. - (Ыйту-хурав / кăларăма Валентина Багадерова хатĕрленĕ).

**Ястран, М.** (1916-1942). Ҫӑкалӑхра. Ирхине, шурӑмпуҫ ҫӗкленсессӗн. Пирӗн аттен ҫич ывӑл : Халӑх юрри тӑрӑх : [сӑвӑсем] / М. Г. Ястран // Чӑваш литературин антологийӗ / [ред. ушкӑнӗ: С. Л. Павлов т. ыт. ; В. Г. Родионов, В. Н. Алексеев пухса хатӗрленӗ ; В. Н. Гончаров ӳнерҫӗ]. - Шупашкар : Чӑваш кӗнеке издательстви, 2013. - **[Т. 2]**: Поэзи. - С. 253-254 : сӑн ӳкерчӗк. - ISBN 978-5-7670-2151-2.

## «Максим Ястран яланах халӑх асӑнче»
## Сценарий

Сцена çинче М.Ястранан сан укерчеке, кӗнеке куравӗ «Максим Ястран- 100 çул».
Фонограммапа Ананий Иванов (Вутлан ялӗ)
М. Ястрана халаласа çырнӑ сӑвӑ йӗркисем илтӗнеççӗ.

Хал**ӑ**х калани х**ӑ**ватл**ӑ**
Халӑ̀х тӗрӗç ӗмӗрех:
Сӑвӑçсем чӑ̀нах çунатлӑ
Емӗр вилӗмсӗр чӗрех

Вӑрманкас каччи хастарччӗ
Асӑнар ӑна ятра̀н
Мал вӗçевлӗ чӑ̀н поэтчӗ
Харсӑр çын Максим Ястран.

Вӑл тӗрленӗ сӑвӑ йӗрӗ
Халӑх чунӗнче çиçет,
Сӑввисен кашни йӗркийӗ
Илӗртуллӗ çут инçӗт.

Вӑл кӗрешнӗ çав инçетшӗн
Перопа та пӑшалпа.
Таван халӑхшӑ̀н, телейшӗн
Куçа-куçӑн тӑшманпа.

Сăлтăр пат! уксе çутатнăн
Августра çĕрĕн питне,
Сăлтăрла çунса хĕм сапăнă
Вăл хăй çамрăк ĕмĕрне.

Вăрманкас каччи хастарччĕ,
Асăнар ăна ятран.
Емĕрех ятне хăварчĕ
Чĕререх ялан Ястран!

***<u>1 ертсе пыракан.</u>***
Ырă кун, хисепле хăнасем, ял еçченесем, шкул ачисем!
Паян пысак уяв – Максим Григорьевич Григорьев, пиреншен вăл яланах Максим Ястран, поэтан 100 çулхи юбилейне паллă тăватпăр. Тĕллевĕ пĕрре - çыравçăн ятне паянхи çамрăк ару асра тыттăр, унпа яланах мухтанмалла пултăр.
1916 – мĕш çулхи çурла уйăхĕн 26 – мĕшĕнче Элĕк районенчи Вăрманкас Юнтапа ялĕнче чухăн хресчен килйышĕнче çуралса, çамрăклăх тăлăха юлнă поэт хăйĕн 27 – мĕш хĕлне кĕреймен. 26 çулхи çамрăк 1942- мĕш çулта Тăван Сершыва хутĕлесе Сталинград патенчи çапăсура пуçне хунă. Самрăк пулсан та Максим фашистсене хирĕç пăшалпа çапăçса кăна мар, вăл тăван литературăра та тарăн йĕр хăварма пултарнă. Максим Ястран – поэт, кусарусă, публицист, журналист яланах халăх асĕнче юлĕ. Максим Ястран ятне пирĕн тăрăхра пĕлмен çын та сук. Пĕчĕк ялтан тухнă чăваш каччин ĕмĕчĕсем пысак та илĕртуллĕ, харсăр та çунатлă пулнă. Максим Ястран яланах пирĕн асăмра, вăл çуралса уснĕ ял урамĕ унăн ячĕпе хиспленсе тăрать, çуралнă выранта пĕчĕк палăк лартнă, 2011 çулта Вутланти вулавăша ун ятне панă.
***<u>2 ерте пыракан:</u>***
Максим Ястран çыравçăна чыслама паян пирĕн пата хаклă хăнасем килсе çитрĕç.
Хăнасем сцена сине хапарнă май, фоногрммăпа
М. Ястран çырнă «Август» сăвви янăрать.

Куллен - кунах, кирек хăш уйăхра та,
Каймастăн, август, эсĕ ман  умран.
Эп сан тумна хĕлле те уйăратăп,
Су кунĕнче ямастăп та асран.

Мен – ма тесен,  кашни çыншăн – этемшен
Суралнă кун тухмасть, теп, манăçа.
Ем - ешĕл август эсĕ çавăнпа – ши
Сĕклентерме пĕлетĕн ман чуна?

Суралнă кун пуриншĕн те пит паллă.
Суралнă кун ман август ăшăнче…
Сăнанă пуль: çĕтеклĕ çимĕç тулăх
Тăрать ялан çак уйăх хушшинче.

Астунă пуль: уй- хирен ешĕл тумĕ
Ылттăнлатать çак уйăх çитнĕ май.
Сăнанă пуль: швысенĕн кĕмĕл хумĕ
Сак уйăхра тăп - тăрă уйрăмах.

Куç хывнă пуль çут августри садсенĕн
Улмисем кĕрпеклĕн пиçнине.
Тутаннă пуль колхозник ĕнисенĕн
Сĕт- турăхĕ хăçан сĕткенлине.

Итленĕ пулĕ самăр путене те
Хай юррине илемлĕн тăснине?-
Çаксем, август, сан. Эп килленетĕп:
Сак сăн- тĕссем умра ман  - кулленех.

Сан сăн – тĕссем нихсан та манăçмаççĕ,
Çуралнă кун тухман пек манăса.
Сĕткенлĕ август, савăнпах- çке эсĕ
Çĕклентерен ялан та ман чуна.

***2 – меш ертсе пыракан:***

Сăмах – район администраци тата поселени пуçлăхесене.

Вал çуралнă, теççĕ, шуçăм
Çакнă ылтăн сăпкара,
Сăртри çил ăна тек уççăн
Ачашланă, тет, вара.
Амăрткайаксем сиктернĕ,
Тессĕ, унăн сăпкине.
Сăр – тусем хĕмленĕ, теççĕ
Унăн сăвăç чĕрине.

Сакă сăвă йĕркисене М. Ястран шăрсаланă пулин те, вĕсене хăйне халаласа вулас килет, мĕншĕн тесен кашни сăмахĕ – унăн пурнăс йерĕ, шухăшĕ, кăмалĕ, туртăмĕ. Măн сăмахсемне, ахăртнех, хăнасем те сиреплетсе парассĕ пулĕ тетĕп.

Сăмах – республикăран килнĕ хăнасене.

***<u>1 ертсе пыракан.</u>***

Сын санĕ сăнукерчекре упранать, сăвăç кăмăл- туйăмĕ, ененевепе шанчăкĕ, тасалăхепе иреклехĕ, суралнă сершывне, тăван литературăна, сынсене юратни сăввисенче palăрать. « Максим хăмăр куслă, шатрарах питлĕ, вăтам пуллĕ сынччĕ. Питенче яланах йăлтăр кулă сисетчĕ, каласма унпа камаллă та кăсăклăччĕ, меншен тесен тавра курăмĕ анлаччĕ, пуплеве сăнарлаччĕ. Ун пек ĕсчен сын эпе тел пулман та темелле. Самрăк поэт сырмасăр- ĕслемесер минут ахаль сая яман. Сăвă шăрсалама тытăнсан, сывăха ан пыр ун патне – шавлăн ĕслетче. Сăмахсене ахах перчи пек суйланă май янравлă та витемлĕ кăлараш тупсан е йерке сырăнсан, урисемпе ташланă евĕр тапăртатса илетчĕ, хĕпертесе саспа янрататчĕ», - пичет ветеранĕ Александр Николаевич Мешков асаилĕвĕнчен.

Сăмах – писателсене, краеведсене.
Хăнасем сцена синчен анассĕ.

**2 ертсе пыракан.**
Максим Ястран сырнӑ сӑвӑсем халӑх сӑвви – юррисемпе сывӑх тарассӗ. Сырнӑ вӑхӑтра вӑл халӑх пултарулӑхне те тӗпченӗ. Поэт нумай есленӗ, шыранӑ.

Максим Ястан – лирик. Хӑйӗн чылай сӑввисенче вӑл тавралӑх илемне сӑнласа парать.

**Сава вулакан.**

Сӑка сулси саврака та
Мӗн каласа çырнӑ-ши?»
Çак юрра асра тытатӑп
Эп чылай çулсем хушши.
Çуркунне юрсем кайсассӑн,
Сарӑлсассӑн сар çӑка, —
Атӑл шывӗ пит хавассӑн
Илӗртет пур çамрӑка!..
Атӑл тӑрӑхӗ — çӑкалӑх.
Вӑл çӑкалӑхра эпир
Шурӑ лантӑш асӑнмалӑх
Пуçтараттӑмӑр ир-ир.
Савӑк юрӑ эс пуçтартӑн,
Куртӑн та çӑка çулçи:
«Çӑка çулçи çаврака та
Мӗн каласа çырнӑ-щи?..»
Пурнӑç çулӗ пит те аслӑ...
Çав çӑкалӑхра эпир
Тӗл пулайрӑмӑр хаваслӑн, —
Сывпуллашрӑмӑр пӗр ир!..
Эп çӑкалӑха саватӑп,
Шухӑшлатӑп çулсем хушши:
«Çӑка çулçи çаврака та,
Мӗн каласа çырнӑ-ши?»

***1 ертсе пыракан :***
Ястран чӑваш поэзийӗн çӗнӗ формисене шыранӑ, тӑван чӗлхен пуянлӑхне кӑтартса парасшӑн пулнӑ, çавӑнпа вырӑс тата ытти халӑхсен поэзине тепченӗ.

Поэтăмăр кăткăс рифмăсем хайласа тупма юратнă, чĕлхере пĕрчĕн- пĕрчĕн тенĕ пек сăмах суйланă. Çакна вăл çырнă йăлтах пĕр саспаллирен пуçланакан сăвăсем кăтартса параççĕ.

**Сăвă вулакан.**

Çуркунне-çке çитрé
Çумăр çунипе
Çиçéмсем çиçеççé
Çиçкéн çутипе

Çитéнет çéн çеçпéл,
Çéнелет çерем
Çăлтăрсен çутийé
Сутатать çéре.

Çéмéртсем çурлаççé
Çулçăра çăка
Çул çинех çиренé
Сивéтне çакать

Çуталать çанаталăк
Çиçéм çиçнипе.
Çéнелет çéршывăм
Çéн çентерÿпе.

***<u>2 – меш ертсе пыракан.</u>***

Çамрăк поэт хăй çуралнă çĕрне-шывне, тăван литрературăна чунтан-чĕререн юратнă. Вãрçă пуçлансанах вăл тăшмана хирĕç кĕрешме чĕнекен сăвăсем çырнă. Акă «Айтăр, тантăшсам, каятпăр» сăвă.

**Сăвă вулакан.**

Айтăр, тантăшсем, каятпăр
Çапăçу хирне.
Фашистсен ури ан пустăр
Пирĕн çĕр Çине.

Пĕр хут мар эпир аркатнă
Тăшмансен çарне...
Айтăр, тантăшсем, каятпăр
Çапăçу хирне.

Хаклă тăвансем, ан йĕрĕр,
Ан тăкăр куççуль.
Çапăçу уй-хирĕ витĕр
Курăнать çĕн çул.
Вут-вăрçă витĕр çĕкленнĕ
Ирĕклĕ кунçул...
Хаклă тăвансем, ан йĕрĕр,
Ан тăкăр куççуль.

Тĕнчипех телей хĕвелĕ
Тухĕ ялтăрса:
Кашнинех тивĕç телейлĕ
Хĕрлĕ Çăлтăрсем.
Хĕрлĕ Çар татах чап илĕ
Çĕнтерӳ туса...
Тĕнчипех телей хĕвелĕ
Тухĕ ялтăрса.

***1 – меш ертсе пыракан.***

1941 çулта çырнă «Вилнĕ тусăма» сăввинче поэт хурлăхлăн та шанчăклăн калаçать.

**Сăвă вулакан.**

М. Ястран «Вилнĕ тусăма»

Çывăр, хаклă тусăм,
Тутлă ыйăхпа.
Çивĕч пăшалу сан
Халь çӳрет манпа.

Эс юратнă хурăн,
Эс савнă пилеш
Мана çĕнĕ юрă
Юрлама пиллеç.

Сан чĕрӳн хăвачĕ,
 Сан чĕрӳнти юн
 Çĕн вăй-хăват пачĕ
 Эс пуç хунă кун.

Иккĕн пĕрле уçнă
 Сăвăсен садне
 Тутлă çимĕçсем эп
 Хушăп кулленех.

Сан чапна эп çĕклĕп
 Иксĕлми вăйпа.
 Çывăр, тусăм, канлĕн
 Тутлă ыйăхпа.

***2 – меш ертсе пыракан.***

Кашни сăввине чĕререн çырать Максим Ястран. Хăйне ĕçлеме вăхăт сахал юлнине туйнă – тăр поэт.

Сцена çинче сĕтел хушшинче поэт сăвă çырать, çурта çунать. Фонограммăпа сăвă йеркисем илтенеççĕ.
Сурта çунса ларать… Сыратăп сăвă ун çуттипе.
Сехет шаккать…Васкать вăхăт хай юрттипе.
Сыратăп, эп, пуç  çеклеми сыратăп…
Вăхăт юртать.
Сунать, çунать те эпе асархатăп,- сунет çурта.
Эп шухашлатăп: çурта пек çӳне ман чунăм ак…
Сапах та çуртаран та йуне пулмасть сăмах.

Чанах та çурта евер хăвăрт сӳннĕ Максим Ястранăн пурнăçе. Варçă ура хунă унăн пурнăçе çине. Татах мен чухле сăвă парналене пулечче поэт пураннă пулсан.
Сук, черех поэт…

 «Поэта» ятлă сăввинче хаех çапла калать вал:
Пире савать, поэт, хевел хелхеме,

Пире савать!
Юрра- сăвва нихсан вăл
ватăлтарме,
Юрра- сăвва!

Поэт, кусаруса, журналист Максим Ястран халăх асенче яланах упране. Унăн сăввисем пиренпе пулес.

Юра янăрать «Атьăр,танташсем» (сăвви Максим Ястранăн. Кевви Г. Лисковăн).

***Максим Ястран çуралнăранпа 100 çул çитнине халаласа хатĕрленĕ методика материалĕ.***

# Максим Ястран яланах халăх асăнче

Кăларăмшăн ответлă
Р.М. Гордеева

Хатĕрлекенĕ
А.Ф. Егорова

Компьютерпа пичетлекенĕ
А.Ф. Егорова

*Эĕлкри тĕп библиотекари методикапа библиогрфи пайĕнче пичетленĕ*
***429250 ЧР,*** Элĕк ***районĕ,*** Элĕк сали***,. Советски урамĕ, 13ç.***
***Тел.: 883535 22-9-07***
*e-mail:alik_bib@cbx.ru*
*20 экз. тирашпа тухнă*